292

40

# СВЯТЫЙ БЛАГОВѢРНЫЙ

КНЯЗЬ

# ВЛАДИМІРЪ

И

# крещеніе Руси.

*На чувашскомъ языкѣ.*

**Изданіе Православнаго Миссіонерскаго Общества.**

КАЗАНЬ.
Типографія А. М. Петрова, П.-Влад. ул., с. д.
1905 г.

От̆ъ Переводческой Коммиссіи Православнаго Миссіонерскаго Общества печатать разрѣшается. Казань. 17 января 1905 г. Предсѣдатель Переводческой Коммиссіи. Профессоръ Казанской Академіи М. Машановъ.



# I

Христос çурални 900 çул иртсен вырӑс халӑхӗсем Христос тӗнне кӗре пуçланӑ. Унӡӡен вӗсем кӗлеткесене пуççапакансем пулнӑ. Вырӑссем Христос тӗнне кӗни Владимір княз вӑхӑтӗнӡе пулнӑ; вӑл княз Кіев йатлӑ хулара пурӑннӑ. Владиміртен ӗлӗк вырӑссем хушшинӡе Христос тӗнне тытакансем пӑртакçӑ пулнӑ. Владимір ӡӑн тӗне кӗреӡӡен кӗлеткесене пуççапса, вӗсемшӗн пит тӑрӑшса пурӑннӑ, хӑш ӡухне кӗлеткесене етем пуса-пуса та ӡӳк тунӑ. Çапла пӗр вӑхӑтра вӑл йут халӑхсемпе çапӑçса, вӗсене çӗнтерсе Кіева тавӑрӑнсан, пӗр çитӗннӗ арçын аӡана, йе хӗр аӡана шӑпапа суйласа, парнене кӳме пулнӑ. Шӑпа пӗр Өеодор йатлӑ, Христос тӗнне тытакан çыннӑн ывӑлне Іоанна тухнӑ. Кӗлеткесене пуççапакансем Өеодора пырса каланӑ: „епир санӑн аӡуна парнене кӳме суйларӑмӑр, есӗ ӑна пире пар, епир ӑна хамӑрӑн туррӑмӑрсене парнене кӳрер“, тенӗ. Өеодор вӗсене каланӑ: „сирӗн туррӑрсем ӡӑн Турӑ мар, вӗсене йӑвӑçран тунӑ, çӗрсе пӗтекен йапаласем кӑна. Ӡӑн Турӑ пӗрре анӡах, Христос тӗнне тытакансем пуççапакан Турӑ, пӗлӗте, çӗре, хӗвеле, уйӑха, çӑлтӑрсене, етеме, тӗнӡере мӗн пур йапалана Вӑл пултарнӑ. Сирӗн туррӑрсем мӗн пултарнӑ? Çук, епӗ ывӑлӑма сире памастӑп“.

тенĕ. Θеодорăн çапла сăмахĕсене илтсен, кĕлеткесене пуççапакансем пит çиленсе, унăн пўрђĕ умĕнђе: „пар ађуна, пар ађуна!“ тесе кăçкăрса кўсексем (риђаксем) кăтартса хăратса тăнă. Θеодор вĕсене каланă: „сирĕн кĕлеткĕрсем, ђăн турăсем пулсан, хăйсем вилсе илђђĕр“, тенĕ. Çак сăмахсемшĕн кĕлеткесене пуççапакансем пит çеленсе, Θеодора хăйне те, ађине те хĕнесе вĕлернĕ. Çапла Θеодорпа унăн ывăлĕ Іоанн Христоса ĕненнĕшĕн асап курса вилсе, Турă умĕнђе сăваплă пулса, святойа тухнă.

II

Θеодор каланă сăмахсем халăх хушшине те сарăлнă, Владимір князя та çитнĕ, вăл çав сăмахсенђен кĕлеткесене пуççапса пурăнни суйа тĕн иккенне пĕлнĕ те, урăх тĕне кĕме шухăшланă. Пур тĕнсенђен те питрех вăл грек халăхĕ тытса тăракан тĕне, Христос тĕнне йуратнă. Христос тĕнне кĕређђен малтан вăл урăх тĕнсене те сăнаса пăхасшăн пулнă. Владимір тĕне улăштарас тенине йут халăхсем те илтнĕ, вĕсенĕн пуринĕн те ăна хăйсен тĕнне кўртессисем килнĕ. Ђăн малтан Магомет тĕнне тытса пурăнакан болгар йатлă халăх (вĕсем Кама шывĕ хĕрринђе пурăннă) Владиміре хăйсен тĕнне кўртесшĕн, ун патне муллисене (пупсене) йанă. Вĕсем Владиміре каланă: „есĕ, княз, пирĕн Магомете ĕненсе унăн законне тыт“, тенĕ. Владимір каланă: „вара сирĕн законăрсем мĕнле, есир ăна мана каласа кăтартăр-ха“, тенĕ. Мулласем Магомет тĕнĕ çинђен каласа панă та, ăна пит мухтанă, анђах Владимір вĕсем улталанине сиссе, Магомет тĕнĕ ђăн тĕн мар тесе, ăна йуратмасăр, мулласене кайалла йанă. Вĕсем хыçĕнђен нимĕçсем те хăйсен вĕреннĕ çыннисене йарса, Владиміре калаттарнă: „епир тытакан тĕн—ђăн çутти, епир пуççапатпăр ђăн Турра, Вăл пĕлĕте, çĕре, хĕвеле, уйăха, тĕнђери мĕн пур йапалана пултарнă; сирĕн туррăрсем йăвăç кăна“, тенĕ. Владимір вĕсенђен: „сирĕн тĕнре мĕнле заповѣдсем пур?“ тесе ыйтнă. Вĕсем каланă: „пирĕн типĕ тытасси пит çăмăл: тытас килекен çын тытать, тытас килменни тытмасть, тытмасан та çылăх мар“, тенĕ. Вĕсем Владиміре, типĕ çăмăл пирĕн тесе, хăйсен тĕнне кўртесшĕн пулнă, анђах Владимір вĕсене каланă: „кайăр, калла таврăнăр, пирĕн асаттесем тĕне сиртен вĕренмен“, тенĕ. Владимíртен ĕлĕк ђăн тĕне тыткалакан вырăссем те тĕне нимĕçсенђен вĕренмен, грексенђен вĕреннĕ. Жидсем те, Владимір тĕн сăнанине илтсен, ăна хăйсен тĕнне кўртесшĕн, çынсем йанă; вĕсем Владиміре каланă:

„Христос тĕнне тытакансем епир пăталанă Іисуса ĕненеççĕ, епир Авраам, Исаак, Іаков Туррине ĕненетпĕр“, тенĕ; унтан хăйсен законĕсене, заповĕдсене каласа кăтартнă. Вĕсем калаçса пĕтерсен, Владимір: „сирĕн çĕрĕр ăçта?“ тесе ыйтнă. Жидсем каланă: „пирĕн çĕр Іерусалим, анӡах Тура пире çиленсе çĕрĕмĕртен хăваласа кăларса, пирĕн çĕре Христоса ĕненекен çынсенĕн аллине панă“, тенĕ. Владимір вĕсене пит çиленсе калане: „есир, апла пулсан, хăвăра Тура ылханнă пек, пире те ылхантăр тетĕр-и мĕн? хăвăра пĕтĕм çĕре салатнă пек, пире те салатассăр килет-и мĕн?“ тенĕ. Вăл вĕсене çапла намăслантарса килĕсене калла йанă. Ӡăн кайран Владимір патне грексенӡен пĕр монах килнĕ. Вăл малтан Магомет тĕнĕ суйа тĕн икенне кăтартнă; унтан нимĕçсем вĕрентнин йăнăшне кăтартнă. Владимір ăна каланă: „ман пата килнĕ жидсем, есир вĕсем пăталанине ĕненетĕр тесе каларĕç, çапла-и вăл“, тенĕ. Монах: „вăл ак çапла пулнă“, тенĕ. „Елĕк пророксем малтанах Христос Тура çуралассине, хĕрес çумне пăталанассине, вилсе ӡĕрĕлсе тăрассине, пĕлĕт çине çĕкленессине каласа хунă, анӡах çак сăмахсем пур те вырăна килсен, жидсем ĕненмен, çавăнпа Тура вĕсене пĕтĕм çĕре салатнă“, тенĕ. Владимір каланă: „апла Тура мĕнле çĕр çине килсе асапланнă?“—Монах каланă: „ей патша! санăн ӡăнах та итлессӳ килсен, епĕ сана пуçĕнӡенех каласа кăтартам“, тенĕ. Владимір: „йурĕ, кала, епĕ итлем“, тенĕ. Вара ăна монах тĕнӡене пултарнине, етеме пултарнине, вăл çылăха кĕнине, унтан пророксем çинӡен, вĕсем Іисус Христос Тура çинӡен малтанах каласа хунă сăмахсене, Тура Ывалĕ Іисус Христос çĕр çине килсе пурăннине, çынсене вĕрентнине, тĕрлĕ хăватсем тунине, пирĕншĕн асапланса вилсе, пире шуйттан аллинӡен çăлнине, вилсе ӡĕрĕлсе тăнине, унтан Вăл пĕлĕт çине çĕкленнине каласа панă. Ӡăн кайран тĕнӡе пĕтесси çинӡен каласа кăтартнă та çавăнтах унăн картинне (мĕлкине) кăтартса: „ак сылтăм йенӡе сăваплисем тăраççĕ, сулахай йенӡе çылăхлă çынсем тăраççĕ“, тенĕ. Тасисем ĕмĕрлĕх савăнăçа (çăтмаха) кĕрĕç, çылăхлисем ĕмĕрлĕх вута пăрахăнĕç“, тенĕ. Владимір хуйхăрса каланă: „сылтăм йенӡе тăраканнисене пит аван, сулахай йенӡисене пит хурланмалла“, тенĕ. Монах каланă: „сылтăм йенӡе пулассу килсен Христос тĕнне кĕр“, тенĕ. Анӡах Владимір урăх тĕнсене те сăнасшăн пулнă. Грек çĕрĕнӡен килнĕ монаха вăл пит ӡисласа парнесем парса хăйсен çĕрне ăсатнă; ăна ăсатсанах Владимір хăй патшалăхĕнӡи ватăсене, улпутсене канаша пуçтарнă. Вĕсем пухăнсан вăл каланă: „ман пата Магомет тĕнне тытакансем,

жидсем, нимӗҫсем, грексем хӑйсенӗн тӗнӗсене кӗме тимлемешкӗн ҫынсем йаҭӗҫӗ, вӗсем пур те харкам хӑй тӗнне пит мухтаҫҫӗ“, тенӗ. Канаша пухӑннӑ ҫынсем каланӑ: „князь, пӗри те хӑй тӗнне усалламасӑ, кирек кам та хӑйӗнне мухтаӑ; хӑшӗ ҭӑн тӗн иккенне пӗлессӳ килсен, ӑслӑ, шанҭӑклӑ ҫынсем суйласа ҫав халӑхсем патне йар; вӗсенӗн тӗнӗсене сӑнаса пӗлсе килсе пире каласа кӑтартҭӑр“, тенӗ. Ҫак канаш Владимір кӑмӑлне килнӗ; вӑл вырӑссен хушшинҭен вунӑ ҫын суйласа, ҫав халӑхсем патне йанӑ. Вӗсем Магомет тӗнӗпе пурӑнакан болгарсем патне, жидсем, нимӗҫсем патне пынӑ, вӗсенӗн тӗнӗсене, кӗлӗ тунине, мӗнле пурӑннисене пурне те курнӑ, анҭах Владимір ҫыннисем пӗрин тӗнне те ӑшатмасӑр (йуратмасӑр) кайнӑ. Йулашкинҭен вӗсем Грексен хулине Константинополе пынӑ; вӑл хулара вӗсенӗн патши пурӑннӑ. Патша, вырӑссем грексен тӗнне пӗлесшӗн килнине илтсен, ҭиркӗвӗн илемне, кӗлӗ тунин илемне лайӑхрах курҭӑр тесе, вӗсене ҭиркӳре ҫӳлӗ вырӑна тӑратнӑ. Грексем кӗлӗ туни вырӑссен кӑмӑлне пит килнӗ. Патша вӗсене пит ҭисласа, хӑйсен ҫӗрне ӑсатнӑ. Вӗсем киле тавӑрӑнсан Владимір татах ватӑсене канаша пуҫтарнӑ. Ҫак пухува тӗн сӑнаса тавӑрӑннӑ ватӑсене ҭӗнтерсе илсе, вӗсене мӗн курнине, мӗн илтнине пурне те каласа кӑтартма хушнӑ. Тӗн сӑнакансем каланӑ: „малтан епир Магомет тӗнне тытакан болгарсем патне пытӑмӑр, вӗсем меҫӗтре намаз тунине куртӑмӑр, анҭах вӗсенӗн намаз туни пире пит киҭем, кӑмӑлсӑр туйӑнҭӗ: пурӑнӑҫӗсене те пӗр те йуратмарӑмӑр. Унтан епир нимӗҫсем патне те, жидсем патне те пытӑмӑр, вӗсем те пӗр те кӑмӑла килмерӗҫ. Йулашкинҭен грексем патне пытӑмӑр та, вӗсенӗн ҭиркӗвӗсене кӗрсе, кӗлӗ тунисене куртӑмӑр, анҭах вӗсем кӗлӗ тунисене каласа пӗтерме пирӗн халӑмӑр ҫитмест: ҫав тӗрлӗ вӗсем аван, илемлӗ тӑваҫҫӗ; епир вӗсем кӗл тунӑ ҭухне те ҫӗрте, те пӗлӗт ҫинҭе тӑтӑмӑр, ӑҫта тӑнине те сисмерӗмӗр“, тенӗ. „Ун пек лайӑх, ун пек илемлӗ тӗн пӗтӗм ҫӗр ҫинҭе те урӑх ҫук, ҭиркӳре мӗн курнисене пурне те каласа пӗтерме пирӗн ҭӗлхемӗр те ҫитмест; анҭах унти ҫынсемпе пӗрле Турӑ хӑй тӑни паллӑ“, тенӗ. Унтан тата каланӑ: „Тутлине ҫисен тутлӑмаррине ҫийес килмен пек, епир те ӗнтӗ кӗлеткесене пуҫҫапассине пӑрахатпӑр та, Христос тӗнне, ҭӑн тӗне кӗретпӗр“, тенӗ. Пухури ватӑсем Владимірe каланӑ: „Христос тӗнӗ суйа пулсан, санӑн асламу св. Ольга вӑл тӗне кӗмӗ-ҭҫӗ, мӗншӗн тесен вӑл пур етемсенҭен те ӑсларах-ҭӗ“, тенӗ.

## III

988-мĕш çулта Владимір княз çарă пуçтарса, грексен хулине Корсуна илме кайма шухăшланă; унта кайма тухас умĕн вăл çапла сăмах панă: „ей пурне те тытса тăракан Тұрă! Сана йăлăнатăп, Корсун хулине илме мана пулăш, вара епĕ вăл хуларан, хамăн халăхăма Христос тĕнне вĕрентме, христіансем, священниксем илсе тавăрăнăттăм-ђĕ“, тенĕ. Унтан Владимір çапла шухăшланă: „суйа тĕнре ђухне епĕ темиçе арăмпа пурăннă, Христос тĕнне кĕрсен пĕр арăмпа кăна тăрăттăм-ђĕ“, тенĕ; çавăнпа вăл грек патшисенĕн йăмăкне кађђа илесшĕн пулнă.—„Вăл хĕр Христос тĕнĕнђе, Унăн законĕпе пурăнат, çавăнпа мана та таса пурăнăçа вĕрентсе тăрĕ-ђђĕ,“ тенĕ. Вара вăл, грек патшисем мана, суйа тĕнпе пурăнакан çынна, хăйсен йăмăкне тӳрех памĕçĕ тесе, вĕсене хăратса хăй йенне çавăрасшăн пулнă. Грексемпе хурăнташлă пулсан, вĕсем мана патшалăхăмри халăхăма Христос тĕнне кӳртме, ђиркӳсем лартма ђăн кăмăлтан пулăшĕç тесе шухăшланă. Çак хисепе тытса Владимір княз çаррине пуçтарса Корсуна илме кайнă. Корсун хули пит пысăк, пит пуйан, пит нăх хула пулнă. Вырăссем ку хулана илни ак çапла пулнă: Владимір çарри темĕн ђухлĕ тăрăшсан та, Корсуна нумайђђен илеймесĕр йĕри тавра хупăрласа тăнă. Вара хуларан пĕр Анастас йатлă грек ухă çумне, хулана йепле илесси тĕлешĕнђен çырнă çыру ђăркана та, çав ухха вырăссем çинелле йанă. Владимір вăл çырăва вулаcа пăхтарса, хула тулашĕнђен хулана çĕр айĕнђе валашкапа йухса кĕрекен шыв пуррине пĕлнĕ; вара çак валашкана шыраса тупнă та, хулари çынсене шывсăр хăварнă. Унтан Владимір пĕлĕт çине пăхса каланă: „ку хулана илсессĕн Христос тĕнне кĕреттĕм“, тенĕ. Вара вăл, каланă пек, Корсун хулине илнĕ те грек патшисене: „епĕ хулăра илтĕм, сирĕн йамăкăр пур теççĕ, ăна мана кађђа парăр, памасан Константинополе те пырса илеп“, тесе калама çынсем йанă. Патшасем ăна хирĕç: „пирĕн христіансен тĕне кĕмен çынна хĕре кађђа пама закон хушмасть; Христос тĕнне кĕрсен йăмăкăмăра та илĕн, пĕлĕт çинђи патшалăха та тупăн, тĕнĕмĕр те пĕр пулĕ“, тесе калаттарнă. Грек патшисем йанă çынсене Владимір каланă: „патшăрсене калăр: „епĕ тĕне кĕме хатĕр тăратăп, ĕлĕкех сирĕн тĕнĕре сăнарăм, вăл манăн кăмăлăма килет, есир ђиркӳре кĕлĕ туса Турра мухтанине йуратăтăп“, тенĕ. Владимірĕн çак сăмахĕсене илтсессĕн, грек патшисем йăмăкне, Аннана, ăна кађђа кайма тимле пуçланă; Анна, пиђђĕшĕсен

ҫӑмахне итлесе, Владимiре каҭҭа кайма пулнӑ. Унтан вӗсем Владимiре: „малтан тӗне кӗр, вара йӑмӑкӑмӑра йарӑпӑр“, тесе калаттарнӑ. Владимiр вӗсене хирӗҫ: „йӑмӑкӑра йарӑр, унпа пӗрле тата священниксем килсе мана ҭӑн тӗне вӗрентсе тӗне куртҭӗр“, тенӗ. Анна ҫапахта йут ҫӗре каҭҭа кайма хӑрасарах тӑнӑ. Пиҭҭӗшӗсем ӑна тимлесе каланӑ: „Сан урлӑ Турӑ вырӑс халӑхне ҭӑн тӗне кӳртет, вара грек халӑхне те вӗсем киле киле ҫӗмӗресрен хӑтарӑт; вырӑс патши пит вӑйлӑ патша вӑл“, тенӗ. Ҫавӑнтан вара тин Анна пиҭҭӗшӗсем каланине тӑнласа пур тӑванӗсенҭен те уйӑрӑлса патшана ҫывӑх тӑракан ҫынсемпе пӗрле, священниксем илсе кимӗ (карап) ҫине ларса Корсун хулине кайнӑ. Корсун ҫыннисем ӑна пит ҭаплӑ хирӗҫ тухса илсе Софiя йатлӑ ҭиркӗве ҫывӑх пӗр пит лайӑх ҭул ҫурта вырӑнаҫтарнӑ, ҫавна ҫывӑхах тепӗр ҭул ҫуртра Владимiр княз пурӑннӑ.

Ун ҭухне Владимiр куҫӗсем пӑсӑлса пӗр курмасӑр пит хуйхӑрса выртнӑ. Ҫак ҭире Турӑ ун ҫине, вӑл тӗне кӗрес умӗн мӑн кӑмӑллӑлӑхне пӗтерсе йӑвашланса Туррӑн хӑватне пӗлтӗр тесе йанӑ. Павел апостола та Турӑ, тӗне кӗнин хӑватне кӑтартмашкӑн, ӗлӗк курман куҫне, тӗне кӗнӗ ҭух куракан тунӑ. Вара Анна Владимiре: „куҫусем ыратнинҭен хӑтӑлассу килсен, ҭасрах тӗне кӗр“, тесе калаттарнӑ. Владимiр каланӑ: „тӗне кӗрсе куҫӑмсем уҫӑлсан, христiансем ӗненекен Туррӑн аслӑлӑхне пӗлӗп вара“, тенӗ. Унтан вара Корсунри архiерей Аннана Софiя йатлӑ собор ҭиркӳне илсе пырса, Владимiре священниксемпе пӗрле Христос тӗнне кӳртнӗ, ӑна Василий тесе йат хунӑ. Турӑ Владимiре шыва кӗнӗ ҭухне Хайӗн хӑватне кӑтартнӑ: архiерей унӑн пуҫӗ ҫине аллине хурсан, Владимiрӗн куҫӗсем уҫӑлса куракан пулнӑ. Вара вӑл пит савӑнса Турра аслӑласа каланӑ: „акӑ ӗнтӗ епӗ Ҭӑн Турра куртӑм“, тенӗ. Ҫак хӑвата курсан Владимiрпе пӗрле килнӗ улпутсем те, ҫар ҫыннисем те Христос тӗнне кӗнӗ. Унтан вара Владимiрпе Аннана минҭет тунӑ. Грек патшисене тав туса, Владимiр княз Корсун хулине вӗсене калла тавӑрнӑ. Турра ҭӑн тӗне кӗме пулӑшнӑшӑн тав туса Корсуна ҭиркӳ лартнӑ, ӑна Христос умӗн килнӗ шывва кӳртекен Iоанн йатне хунӑ. Владимiр хайпе пӗрле Корсунтан турӑшсем (иконасем), ҭиркӳ таврашӗсем, тӗн тӗлешӗнҭен ҫырнӑ кӗнекесем, святой Климентӑн ҫӗрмесӗр выртакан ӳтне илсе кайасшӑн пулнӑ. Корсунри архiерей ҫак йапаласене пурне те парса князпа княгиняна пиллесе пит пысӑк ҭыс туса Кiева ӑсатнӑ. Ҫапла Владимiр ҭӑн тӗне кӗрсе, мӑйне ҭӗрӗлӗх паракан хӗрес тӑхӑнса, Кiева пит пысӑк савӑнӑҫпа тавӑрӑннӑ. Ун хыҫӗн-

ђен грек патшисем, вырӑссем патне, Кіева Михаил йатлӑ митрополитпа архіерейсене, священниксене вырӑс халӑхне тӗне кӳртме йанӑ.

## IV

Кіева тӑварӑнсан, ђӑн малтан Владимірӗн вун икӗ ывӑлӗ тӗне кӗнӗ. Владимір хушнӑ тӑрӑх хулари турӑ тейекен кӗлеткесене пурне те вакла-вакла ҫунтарса пӗтернӗ. Ђӑн ђаплӑ Перун йатлӑ кӗлеткене лаша хӳринђен кӑкарнӑ та, ту ҫинђен сӗтӗрттерсе анса Днѣпр шывне тӗртсе йанӑ; кӗлеткесене пуҫҫапакансем хӑшӗ хӑшӗ туррине ҫапла мӑшкӑлланӑшӑн йӗре йӗре йулнӑ. Нумайӗшӗ кӗлеткесене пуҫҫапасси пӑрахӑҫа тухнӑшӑн савӑннӑ.

Унтан вара Владимір улпутсемпе пӗрле халӑха пуҫтарса, вӗсене Христос тӗнне кӗме ӳкӗтленӗ. Грек ҫӗрӗнђен килнӗ архіерейсем, пур халӑха та Евангеліерен каласа, вӗсене Христоса ӗненме вӗрентнӗ. Халӑх ђӑн тӗне ӑнласа ҫитсен, Владимір пӗр кунӗнђе хулари ҫынсене пурне те: „ыран мӗн пур етем пур те шыв хӗрне пухӑнӑр“, тесе хыпар тунӑ. „Пымасӑр йулакан ҫын пуйан-и, ҫук-и вӑл, мана хирӗҫ тӑракан пулӗ“, тенӗ. Ҫак хыпара илтсен пур етем те шыв хӗрне анма уҫӑ кӑмӑлпа хатӗрленнӗ. Вӗсем каланӑ: „ку ӗҫ аван пулмасан князпа улпутсем вӑл тӗне кӗмӗђђӗҫ“, тенӗ. Тепӗр кунхине ирех Кіеври ҫынсем пур йенђен те Днѣпр шывӗ хӗрне пӗр ҫӗре пуҫтарӑннӑ. Арӗ-арӑмӗ, ватти-ҫамрӑкӗ, асли-кӗҫӗнни, ађипӑђисемпе, пуйанни-ҫукки, хуҫи-ђури, пур те пынӑ. Тата Владимір княз хӑй, митрополит Михаил, пур архіерейсем, темӗн ђухлӗ священниксем, тӗне ҫӗнӗ кӗнӗ улпутсем пынӑ. Тӗне кӗнине курса савӑнса тӑма ӗлӗкренех Христос тӗнне тытакансем те пухӑннӑ. Архіерейсем, священниксем шыва Святой Сывлӑш хӑвађӗ антӑр тесе кӗлӗсем вуласа Турра йӑлӑнсан, Кіев ҫыннисем: арҫыннисем пӗр ҫӗре, хӗр-арӑммисем тепӗр ҫӗре, архіерейсем хушнӑ тӑрӑх, кӑкӑр таран шыва кӗрсе тӑнӑ: ашшӗ-амӑшӗ ађисене аллисенђе тытса тӑнӑ. Архіерейсемпе священниксем кӗлӗ вуласа йат хурса Ашшийӗн, Ывӑлӗйӗн, Святой Сывлӑшийӗн йађӗпе халӑха шыва кӳртнӗ (тӗне кӳртнӗ).

Халӑх ҫак таинство урлӑ ҫылӑхӗсенђен тасалса, ҫӗнӗ пурӑнӑҫа кӗнӗ.

Ҫак хатер халӑх ђӑн тӗне кӗрсе ҫутта тухнӑшӑн пӗлӗт ҫинђе те пит пысӑк савӑнӑҫ пулнӑ; тӗне кӳртекенсем те, кӗрекенсем те пит савӑннӑ. Кіев халӑхӗ тӗне кӗнӗ вырӑна таса вырӑн тенӗ.

Пуринђен питрех вырӑссем ђӑн тӗне кӗнӗшӗн Владимір княз савӑннӑ; вӑл пӗлӗт ҫинелле пӑхса каланӑ: „ей пӗлӗте, ҫӗре пултарнӑ Аслӑ Турӑ! ҫак ҫӗнӗ етемсем ҫине куҫупа пӑх, вӗсене Ху ђӑн Турӑ иккенне пӗлтер. Христос тӗнне тытакан урӑх йенђи ҫынсем Сана йепле пӗлнӗ, кӑсем тс Сана ҫапла пӗлђђӗр, вӗсем Сана хытӑ ӗненеҫҫӗ. Етем йӑхне тӑшман тӑвакана хирӗҫ тӑма пулӑш мана; Санӑн хӑвату ҫине шанса вӑл тӑшмана ҫӗнме пар“, тенӗ.

Ҫавӑн ђухнех Владимір Кіева ђиркӳсем лартма хушнӑ. Урӑх хуласенђе те, йалсенђе те пур вырӑс халӑхне тӗне кӳртсе, ђиркӳсем лартса священниксем хума хушнӑ. Таса архіерейсемпе священниксем хуласене пыра пыра халӑха пуҫтарса ӳкӗтленӗ: „Христос ҫинђен калаҫнӑ сӑмахсене ӑнласа пурсӑр та Унӑн тӗнне кӗрӗр“, тенӗ. Ҫак сӑмахсене хапӑл илсе нумайӗшӗ Христос тӗнне кӗнӗ. Ҫапла Владимір ђӑн тӗн ҫуттине пӗтӗм патшалӑхне сӑрӑлтарма тӑрӑшнӑ.

Вырӑс халӑхне кӑна мар, йут халӑхсем патне те тӗн ҫинђен вӗрентекенсем йанӑ. Кама шывӗ патӗнђе пурӑнакан болгарсем, печенӗгсем Кіев хулине килсе Христос тӗнне кӗнӗ. Вӗсем ђӑн тӗне кӗнӗшӗн Владимір пит савӑннӑ.

## V

Вырӑс ҫӗрӗнђи халӑха ђӑн тӗне кӳртсе пӗтерсен, Владимір ӗлӗк кӗлеткесем ларнӑ вырӑнсене, халӑх пухӑнакан вырӑнсене ђиркӳсем лартма указ панӑ. Вырӑссем кӗлеткесене пуҫҫапассине пӑрахса, ҫав ђиркӳсене пухӑнса Ђӑн Турра пуҫҫапа пуҫланӑ. Владимір хӑй ҫурђӗ патӗнђе ӗлӗк Перун йатлӑ кӗлетке ларнӑ вырӑна святой Василій йађӗпе ђиркӳ лартнӑ.

Унтан 991—996-мӗш ҫулсенђе Турӑ Амӑшӗ йађӗпе пӗр ђул ђиркӳ лартнӑ. Ӑна ӗҫлеме вӑл ӑстасене грек ҫӗрӗнђен кӳнӗ. Ӗҫлесе пӗтерсен ӑна митрополитсем священниксем пуҫтарӑнса тасатнӑ (освятить тунӑ). Ун ђухне Владимір Соломоп пек Турра ҫапла каласа йӑлӑннӑ: „Ей Турӑ! ҫак ђиркӗве, ун ӑшӗнђи ҫӗнӗ халӑхна пӗлӗт ҫинђен куҫупа пӑх, Есӗ Ђӑн Турӑ иккенне пӗлме вӗсене Ху пулӑшрӑн Ҫак, епӗ Санӑн йурӑхсӑр ђуру, Сана ҫуратнӑ Аннӳ таса Хӗр йађӗпе лартнӑ ђиркӗве пӑх, ҫак ђиркӳре йӑлӑнса кӗл тӑвакан ҫыннӑн кӗллине илт, Хӑвӑн таса Аннӳ кӗллипе кусенӗн ҫылӑхӗсене каҫар“, тенӗ. Тата каланӑ: „пур хуласенђеп килекен тупӑшӑмран вуннӑмӗш пайне ҫак ђиркӗве парӑп“, тенӗ.

Çавăнпа вăл ҫиркĕве халĕ те вырăсла „Десятинная церковь“ теççĕ. Владимір урăх ҫиркӳсем те нумай ĕçлетнĕ; тата митрополитсем, архіерейсем, урăх сынсем те нумайĕшĕ ҫиркӳ лартнă. Вырăссен çĕнĕ ҫиркĕвĕсенҫе кĕлĕ йĕрки грексенни пек пулнă; кĕлĕсене, вырăссем пĕлекен, славян ҫĕлхипе вуланă, йурăсене те çав ҫĕлхепех йурланă. Пирĕн ҫиркӳре халҫ те славянла кĕл-тăваççĕ.

Ҫиркӳ кĕнекисене славян ҫĕлхине Владиміртен пĕр çĕр çул ĕлĕк славянсене Христос тĕнне вĕрентекенсем святой Меѳодійпе Кирилл куçарнă. Вĕсен вĕренекенĕсем çав кĕнекесене болгарсене (Кама патĕнҫи болгарсем мар) панă, вĕсенҫен вара Владимір вырăссем валли илнĕ. Çак ҫĕлхепе çырнă кĕнекесем вырăс халăхĕшĕн Турă сăмахне ăнлама пит аван пулнă. Тĕпе çĕнĕ кĕнĕ вырăссемшĕн ҫиркӳсем тĕн тĕлĕнҫен вĕренмелли вырăн пулнă. Унта вĕсем Евангеліе, апостолсемпе пророксем çырнă çырусене хăйсем пĕлекен ҫĕлхепе вуланине итленĕ. Çак кĕнекесенҫи Турă сăмахĕсенҫен, святой аттесем хунă кĕлĕсенҫен ҫăн тĕнпе таса пурăнăçа вĕренсе, Çăлакан Христос Турра пуççапса, святой çынсене хисеплесе Іисус Христосран ӳкĕт илсе тăнă. Святой Владимір халăх ҫиркĕве çӳресе унта мĕн вуланипе йурланине ăнланăшăн пит савăннă, çавăнпа вăл ăна (халăха) вĕрентесшĕн тăрăшса хула пуçлăхĕсене, улпутсене, тӳресене праçник кунĕсенҫе ҫиркĕве çуреме хушнă. Çапла вырăссем ҫиркĕве çӳренине курса Владимір, кусенҫен Христос тĕнне лайăх тытакан çынсем пулĕçĕ тесе, пит хĕпĕртенĕ.

Пит пысăк ҫаплă княз Владимір, ҫăн тĕне çĕнĕ кĕнĕ вырăс халăхĕ Турă сăмахĕсене ҫиркӳре илтсе кăна мар, хăйсем те вуласа çутта тухҫăр тесе, вĕсене çырăва вĕрентесшĕн пулнă. Грексемпе болгарсем пек ман халăхăм та хăй вуласа, хăй пĕлтĕрҫĕ тесе шухăшланă; архіерейсем те, священниксем те вырăсран пултăр-ҫĕ тенĕ. Çавăнпа вăл ҫăн малтан хăйĕн ывăлĕсене çырăва вĕрентнĕ; вĕсем Турă çинҫен çырнă кĕнекесене вуласа, таса пурăнăçлă пулса хăшĕ святойа тухнă. Владимір улпут ывăлĕсене, ахалҫ çынсенĕн ывăлĕсене те вĕренме шкулсем лартнă; вĕсене вĕрентме грек çĕрĕнҫен вĕрентекенсем (учителсем) кӳпĕ; çапла тума ăна канаш (ăс) паракансем митрополитпа архіерейсем пулнă. Митрополит Михаил çинҫен исторія кĕнеки çинҫе ак çапла çырнă: „вăл аҫасене вĕрентекен учителсене хăй çуртне пуçтара-пуçтара, аҫасене мĕнле вĕрентесси çинҫен кала-кала панă; çырăва кăна мар, кĕнекери Турă сăмахĕсене тĕрĕс ăнлама, ҫăн тĕн çинҫен вĕрентме, тĕн вĕрентнĕ тăрăх лайах пурăнма, аҫасене пĕр тулаш-

масăр, пĕр çилĕсĕр, йăвашлăхпа кăна, вĕсене савса ăспалан вĕрентме ÿкĕтленĕ“, тенĕ.

Владимір кияз хăй патшалăхĕнђи халăха Христос Турă хушнă пек етеме ыралăх тума хушса, хăй те етеме пит пысăк ыралăх кăтартакан çын пулнă. Вал суйа тĕнре ђухне те çынна хĕрхенекен çын пулнă. Ђăн тĕне кĕрсен, лайăх кĕнекесенђен Христос вĕрентнине ăнласа питрех те çынна хĕрхенсе, ăна ыралăх тума пĕтĕм ђунĕпе тăрăшнă, халăха ыралăх кăтартнин ђикки те пулман. Праçник кунĕсенђе анат пĕçерсе, архіерейсене, священниксене, улпутсене, хула пуçлăхĕсене, çук çынсене пурне те апатлантарнă. Кияз çуртне килеймен тумтирсĕрсене, ђирлĕсене ĕçме-çимепе тумтир лавĕ-лавĕпе килĕсене леçтернĕ. Кіевра кăна мар, патшалăхĕнђи урăх хуласенђе те, йалсенђе те çук çынсене, çуртсăрсене, тумтир çуккисене, выçă ларакансене ĕçме-çиме, тумтир, укçа салаттарнă. Хусах арăмсене, ђăлахсене, суккăрсене, ђирлĕ выртакансене пулăшса, вĕсемпĕн хатĕр пулса тăнă. Владимірĕн усăлăхĕпе (йумартлăхепе) етеме хĕрхеннине вырăссем кăна мар, йут патша çыннисем те тĕленсе, ăна пит мухтанă.

Вырăс халăхĕ суйа тĕнпе пурăннă ђухне хура халăха, выђăх пек, сутма та, сутăн илме те йуранă. Владимір Христос тĕнне кĕрсен етемпе сутă тăвас йăлана пĕтернĕ. Вăл ђăн малтан хăй Христос йађĕшĕн хăйĕн ђурисене ирĕке кăларнă, унтан çын аллинђи ђурасене укçа тÿле-тÿле ирĕке кăларнă.

## VI

Владимір хăй ĕмĕрне хуйхăсăр иртттермен: Новгород хулинђе Ярослав йатлă ывăлĕ кияз пулса тăнă вăхăтра, унти халăх пăлханса, çапăç кăларса Владиміре пит хуйхăртса пăшăрхантарнă, çавăнтан вара вăл ђирленĕ. Ун ђухне унăн килĕнђе пĕр ывăлĕ те пулман, пурте ашшĕ панă харпăр хăй хулинђе кияз пулса тăнă. Пĕр Борис йатлă йуратакан ывăлне кăна ђĕнтерсе илнĕ, анђах вăл та ашшĕ ђирленĕ хушăра килте пулман: вырăс çĕрне çĕмĕрме килнĕ пĕр печенĕг йатлă халăха хирĕç кайнă. Владимірĕн уншăн та хуйхăрмалла пулнă. Патша Турă Хăй суйланă çынна ыралăх та кăтартать, савăнăç та парать; кăмăлĕ тасалтăр тесе ăна хуйхă та кăтартать. Ĕмĕр тăтăлми савăнăç çĕр çинђе мар, пĕлĕт çинђе пулĕ. Владимір вилес умĕн ассăн сывласа йарса Турра ак çапла йăлăннă: „ей Патша Турă! ĕлĕк епĕ Сана пĕлместĕм-ђĕ. Есĕ мана Хăна ĕнентерсе тĕне кÿртсе çутта кăлартăн. Унтан епĕ Сана

пуринĕн те Туррине, пур йапалана та пултарнă Святойа, Туррă-мăр Іисус Христос Ашшĕ иккенне пĕлтĕм. Ывăлупа, Святой Сывлăшупа Сана тав тăватăп. Ей пурне те тытса тăракан Турă! Манăн ĕлĕк суйа тĕнре ђухне тунă çылăхăмсене асна ан ил, ун ђухне епĕ Сана пĕлмерĕм, халђ ĕнтĕ пĕлетĕп, ăнлатăп Сана. Ей Патша Туррăм! çырлах мана", тенĕ. Çапла каласанах Владимірĕн ђунĕ ӳтĕнђен уйăрăлса Турă аллине кайнă.

Владимір князь хулан тул йенђи çуртĕнђе Берестовра іюлĕн 15-мĕш кунĕнђе 1115 мĕш çулта вилнĕ. Христос тĕнне кĕни 27 çул, çурални 57 çул иртсен вилнĕ. Унăн ӳтне Кіева илсе килсе Турă Амăшĕ йађĕпе хăй лартнă ђиркĕве пытарнă.

Пĕтĕм халăх святой князь Владимір вилнине илтсессĕн ђиркĕве пухăннă. Пур те унщăн ђарăнаймасăр йĕнĕ. Улпутсем, хула пуçлăхĕсем, ватăсем, ђăлахсем, тăлăхсем, тăлăх арăмсем, пурте: „аттемĕртен, вĕрентекенĕмĕртен, тĕне кӳртекенĕмĕртен, тăрантараканă-мăртан татăлтăмăр", тесе йĕнĕ. Вилнĕ князшăн кĕлĕ тусассăн, унăн тупăкне ђиркӳ ăшне пытарнă. Вырăссем Владиміре хăйсене ђăн тĕне кӳртсе çутта кăларнăшăн пĕрмай аса илех тăнă; кашни çул ăна асăнса вăл вилнĕ кун унщăн кĕлĕ тунă. Çапла ĕненсе кĕл тунине Турă ахалђ хăварман. Апостолсемпе пĕр тан грек патши святой Константин пек Владимір князь та Апостолсемпе пĕр тан пулса пĕтĕм Вырăс патшалăхне ђаплăлатнă. Çавăнпа архіерейсем, монахсем, урăх христіансем те унăн пурăнăçĕ çинђен, вăл тунă ĕçсем çинђен, ăна мухтаса нумай кĕнекесем çырнă; Владиміре кĕл тумалли кĕлĕсем хунă. Вĕсене вуласа іюлĕн 15-мĕш кунĕнђе Владиміре аслăлаççĕ. Святой князь Владимир ӳђĕ Кіеври Печерская Лавра тийекен монастырте митрополит Михаил ӳђĕпе пĕрле выртать. Владимірĕн турăш çине ӳкернĕ сăнне халăх пит хисеплет.

## VII

Вырăс халăхне Христос тĕнне кӳртсе çутта кăларнă святой князь Владиміре пире, ђăвашсене те аса илме пит кирлĕ; ăна асă-накан куна епир те тивĕçлипе хисеплесе иртерер. Епир тытса тăракан Христос тĕнне вырăс халăхне Владимір урлă Турă Хăй панă; çак таса тĕне епир хытă сыхласа тăрар. Вырăссем Христос тĕнне кĕни 900 çул ытлашшипе иртрĕ ĕнтĕ; çак хушăра пит нумай çын хăйсенĕн таса, сăваплă пурăнăçĕсем тăрăх Турăран тивлет илсе святойа тухнă. Пирĕн те çак хамăр тытса тăракан тĕне тĕпĕ йĕрĕпе пĕлсе ђиркӳ вĕрентнине ăнласа илме пит тăрăшас пулать.

Авал славянсене вӗрентекенсем святой Кириллпа Меѳодій ҫак тӗне тытакансем пулнӑ. Ку тӗн грексенҫен вырӑс ҫӗрне сарӑлнӑ. Вырӑссенҫен вара Россіяра пурӑнакан тӗрлӗ халӑх хушшине сарӑлнӑ.

Ҫӑваш хушшинҫе Христос тӗнӗ Вырӑс патши Іоанн Грозный Хусан патшалӑхне туртса илсен (1552 ҫулта) сарӑла пуҫланӑ. Унтаппа ӗнтӗ 350 ҫул иртрӗ, анҫах ҫӑвашсем нумайӗшӗ ҫӑн тӗне пӗлмесӗр, тӗттӗмре пурӑнаҫҫӗ. Тата пит нумайӗшӗ, хӑйсем тӗне кӗнӗ пулсассӑн та, ӗлӗкхи ҫӑваш йӑлине пӑрахмасӑр: „пире асаттесен йӑлине пӑрахма йурамаст“, тесе Турра йурӑхсӑр ӗҫсем туса, кӑмӑлӗсем хытӑ пирки Ҫӑн Турӑ ҫинҫен вӗрентнине те итлемесӗр, тӗрлӗ ирсӗр ҫӳксем туса усала пуҫҫапса, ӑна пӑхӑнса пурӑнаҫҫӗ. Ҫапах та, Турӑ пулӑшнипе, ҫӑвашсем хушшинҫе Христос тӗнне хытӑ тытса тӑракансем те нумай; унпеккисем ҫулленҫул нумайланса пыраҫҫӗ.

Епир, Христоса ӗненекенсем, ҫӑн тӗн кунтан малашне те сарӑлтӑр-ҫӗ, суйа тӗнӗн тӗрлӗ йӑлисем пӗтҫӗр-ҫӗ тесе, Турра йӑлӑнар.

Святой княз Владиміре асӑнса праҫник тунипе Вырӑс патшалӑхӗнҫе пурӑнакан христіансем хушшинҫе пире Ҫӑлакан Патша Турӑ ҫаплӑлантӑр-ҫӗ тейер. Амин.

Цѣна 5 копѣекъ.